● ПУРНĂÇ КАÇАЛĂКĔ

# АСРАН КАЙМИ УХСАЙ

Çураласса эпĕ Чăваш республикинчи Вăрмар районне кĕрекен Мăнçырма ялĕнче çуралнă, анчах ачалăхăм та, ытти пĕтĕм пурнăçăм та Пушкăртстанпа çыхăнчĕ. Унта ÿсрĕм эпĕ, унтах ĕçлерĕм. Вăрçă çÿлĕнче кăна, Днепр шывĕ хĕрринчи Букрин плацдармĕнче йывăр аманнă хыççăн, Шупашкарти госпитальте сипленмелле пулчĕ. Госпиталь пуçлăхĕнче вăл вăхăтра пултаруллă та пуçаруллă врач В. Г. Ефимова ĕçлетчĕ, çĕршывăмăр хÿтĕлевçисене сыватас, строя тăратас енĕпе нумай вăй хуратчĕ.

Кайран, салтакран таврăннă, вĕренсе пĕлÿ илнĕ хыççăн, Чăваш халăх поэчĕн Ухсай Яккăвĕн ячĕпе тачă çыхăннă вырăнсенче пурăнма тÿрĕ килчĕ: вунпилĕк çул майлă КПСС Пишпÿлек райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче, пĕр вăхăт Пелепей районĕçтăвкомĕн председателĕнче ĕçлерĕм. Ку районсенче тĕпрен илсен вырăс, пушкăрт, украин, тутар, мордва çыннисем пурăнаççĕ. Чăвашсем те сахал мар. Чăвашла хаçат та тухать, чăваш шкулĕсем те пур. Пĕтĕмпе Пушкăртстанра 1989 çул тĕлне 118509 чăваш пурăнатчĕ. 1970 çулта ку хисеп 126638 çынпа танлашатчĕ. Тем сăлтавпа кунти чăвашсен шучĕ асăннă тапхăрта 6,4 процент чухлĕ чакнă.

Кунти чăвашсем май килнĕ таран хăйсен йăли-йĕркине тытса пурăнаççĕ. Литературăпа искусство пысăк хисепре вĕсен хушшинче. Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Çемен Элкер, Николай Шелепи, Петĕр Хасанкай тата ытти чăваш çыравçисен ячĕсене халăх сума суса асăнать.

Çирĕппĕнех çакна калама пултаратăп: ку тăрăхра пирĕн паллă ентешĕмĕрĕн, Чăваш халăх поэчĕн, Чăваш Республикин Константин Иванов ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕн, РСФСР Максим Горький ячĕпе хисепленекен Патшалăх премийĕн лауреачĕн, Тăван çĕршыв Аслă вăрçин паттăр салтакĕн Яков Гаврилович Ухсайăн сумлă ĕçĕ-хĕлĕ пуриншĕн та паллă. Вăл çырнă сăвăлла романсем, «Тутимĕр» трагеди, «Кĕлпук мучи», «Ача чухнехи çăлтăрăм» поэмăсен ярăмĕ, унăн лирикăлла сăввисем халăхра анлăн саралнă, вĕсене пурте пĕлеççĕ, вĕсем пирĕн культура пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ.

1960 çул пуçламăшĕнче, чăваш литературин классикĕ Константин Иванов çуралнăранпа 70 çул тултарас умĕн, эпир Слакпуç ялĕнче чăваш поэзийĕн пысăк уявне ирттересси çинчен калаçса татăлтăмăр. Ку пирĕншĕн калама çук яваплă та пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулчĕ, мĕншĕн тесен Слакпуçне чăваш, пушкăрт, вырăс çыравçисен пысăк ушкăнĕ пымаллаччĕ, хăнасем хушшинче паллă та сумлă ентешĕмĕрĕн, чăваш халăх поэчĕн Ухсай Яккăвĕн ячĕ те пурччĕ.

Акă палăртнă вăхăт çитрĕ. Çураки ĕçĕсене хавхаланса вĕçлерĕмĕр, çу уйăхĕн вĕçĕнчи уявлă тапхăра кĕтĕмĕр. Çанталăкĕ те хитре: тавралăх ешерет, уйра-хирте калча çĕкленет, кайăксем хаваслă юрăсем шăрантараççĕ. Слакпуçне халăх çывăхри ялсенчен те, аякрисенчен те питĕ нумай пухăнчĕ, сисмесĕр тенĕ пекех «Нарспи» авторĕн çĕршывĕнче халăх вăййи, халăх уявĕ пуçланса кайрĕ. Çынсем Константин Иванов вилтăприне сăваплăн, юратса пуç таяççĕ, чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Çакă мар-и ĕнтĕ вăл халăх хăйĕн чун-чĕрери туйăмне, шухăш-кăмăлне палăртса тĕрлĕ хайлавсем çыракансене асра тытни, сума суни?

Паллă писательсен ушкăнĕ те пырса çитрĕ. Вĕсемпе пĕрле — Ухсай. Халăх унăн сăмахне уйрăмах тимлĕн итлерĕ. Калаçасса вăл хутсăр-мĕнсĕрех калаçрĕ. Иванов çинчен, унăн поэзийĕ çинчен, пурнăç, çутçанталăк ытăвĕсем çинчен Яков Гаврилович питĕ ăслă каларĕ, вăл анлă тавракурăмлă çын, пысăк шухăшлавçă пулни витĕрех курăнса тăратчĕ. «Вăл нихçан та хут тăрăх калаçмасть, халăха каламалли шухăшĕсем ун чунĕ-чĕринче капланса тăраççĕ», — тенĕччĕ мана пушкăрт çыравçисен ертÿçи Асхат Мирзагитов. Чăнах та, Ухсайпа хăйĕнпе тĕл пулни çакна йăлтах çирĕплетсе пачĕ.

Халăх поэчĕпе кашниех калаçма, унтан мĕн те пулин ыйтса пĕлме тăрăшатчĕ. Яков Гаврилович пуринпе те пĕр пекех кăмăллăн, сăваплăн, тахçантанпа паллакан çынпа курнăçнă чухнехи пек калаçатчĕ. Ентешĕсем Ухсая чăнах та юрататчĕç, хисеплетчĕç. Ку туйăм кашни утăмрах сисĕнсе

тăратчĕ.

Пĕрремĕш хут тĕл пулнă май, ун чухне поэта эпĕ хам та тĕпчевлĕ куçпа пăхрăм пулмалла. Мана унăн кашни сăмахĕ, кашни хусканăвĕ интереслентерчĕ. Яков Гавриловичăн куçĕ питĕ чĕрĕ, йăлтăр, та йăлтăр çиçсе кăна тăрать. Кулнă чухне çынна ырă сунса кулни сисĕнет. Кăштах чеелĕхĕ те çук мар-тăр. Шухăш капланнă вăхăтра çамки пĕркеленсе илет. Пĕвĕпе çўллĕ мар хăй, анчах йăрă çын. Хăрах ури кăштах уксахлать пулин те хăвăрт утать.

Мана уйрăмах вăл каланă сăмахсем шухăша ячĕç. Вăл хресчен ĕçне лайăх пĕлет, çĕр нушисене витĕрех ăнланать, ăна çутçанталăкпа этем хушшинчи ĕмĕрхи çыхăну йĕрки пăсăла пуçлани хытă шухăшлаттарать. Ку ыйтусем, тетĕп эпĕ хам ăшăмра, паллă поэтсене Некрасова, Шевченкона канăç паман. Эппин, Ухсай та халăх пурнăçĕпе пурăнакан, ун хуйхи-суйхине курса тăракан çыравçă. Ахальтен мар ăна Мускавра та лайăх пĕлеççĕ, вăл çырнисене пысăка хурса хакласçĕ. Хăй вăхăтĕнче ăна Фадеев та килĕштернĕ, Твардовский те юратать, ытти чĕлхесене те хапăлласах куçараççĕ.

Майлă самантра эпир иксĕмĕр юлса колхозсенчи лару-тăру çинчен калаçрăмăр, пурнăç ыйтăвĕсене хускатрăмăр. Мана Яков Гаврилович тем те пĕлни, тем те астуни тĕлĕнтерчĕ. Çапла иртрĕ пирĕн пĕрремĕш тĕлпулу.

Кайранхи çулсенче эпир Ухсайпа пĕр-пĕрне лайăх пĕлекен çынсем пулса тăтăмăр. Пелепейпе Пишпўлек, Мияки районĕсенчи ял-хулара, шкулсенче, культура çурчĕсенче, сабантуйсенче, ытти уявсенче, ĕçлĕ калаçусенче нумай хутчен курнăçрăмăр, Ĕпхўре, Шупашкарта, хамăрăн хваттерсенче тĕл пултăмăр. Çакă пире çывăххăн паллашма, туслашма май пачĕ. Эпĕ çакна çирĕплетсе калама пултаратăп: пĕр те пĕр калаçăва, канашлăва е дискуссие Ухсай хутшăнчĕ пулсан, çав калаçура кашниех хăйне валли мĕн те пулин усăллине, çĕннине илетчĕ, çав сăмаха ĕмĕрлĕх асра тытса юлатчĕ, çав шухăшпа хавхаланса ĕçлеме тытăнатчĕ.



Пытармалли çук, Ухсай пире пур чухне те çу пек çемçе те пыл пек тутлă сăмахсем кăна каламан. Вăл хăйне тыткаласси пур чухне те çав вăхăтра çирĕпленнĕ йăла-йĕрке картине шăнăçмастчĕ. Калăпăр, 1981 çулхи пуш уйăхĕнче эпĕ Шупашкарта пултăм, республикăри тĕрлĕ организацисене çитсе куртăм, «Ялав» журнал редакцийĕнчи пĕлĕшсемпе калаçса лартăм. Ухсай пирки пĕтĕмленнĕ шухăш-кăмăл çапла пулчĕ: «Яков Гаврилович — экономика, наука, культура ыйтăвĕсене тарăннăн ăнланакан, хăй халăхĕн чунне илемлĕ литература произведенийĕсенче пысăк шайпа сăнласа кăтартма пултаракан талантлă поэт. Ăслăскер, хăй пурнăçĕнчи ырлăхпа чыс-хисеп пайтине тивĕçлипе курмаллаччĕ вăл. Анчах вăл пуçлăхсене хăй сăмахне ытлашши тӳррĕн калать, куçăн-кĕретĕнех питлет. Çавăн пирки ăна килĕштерсех каймаççĕ, хăш чухне аякка пăрса хăвараççĕ.»

Ку ĕнтĕ Ухсай пурнăçĕпе пултарулăхне тĕрĕс пĕтĕмлетекен хак мартăр, ма тесен поэзи пултарулăхне вăл 70 çул тултарнă кунсенче чи пысăк наградăпа — Ленин орденĕпе палăртнă. Халăх сăвăçне Шупашкарта кăна мар, Мускавра та чысланă. Çапах та пысăк ыйтусенчен чылайăшне Ухсай хăйне евĕрлĕ ăнланнă, пурнăç каярахпа вăл тĕрĕс каланине çирĕплетсе панă тени тĕрĕсех пуль çав.

1981 çулхи кĕркунне Ухсай Ĕпхĕве пычĕ. Пушкăртстан, вăрçă хыççăнхи çулсенче экономикăра, наукăра, культурăпа социаллă пурнăç аталанăвĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăскер, вуннăмĕшпе вунпĕрмĕш пилĕкçуллăхсенче такăна пуçларĕ, промышленноç та, ял хуçалăхĕ те палăрмаллах уксахлама тытăнчĕç. Çутçанталăка сыхлас енĕпе пысăк çитменлĕхсем пурри палăрчĕ. Республика тăрăх курса çӳренĕ, хăйĕн тусĕсемпе тĕл пулса калаçнă поэт çак çитменлĕхсене аван пĕлетчĕ. Вăл уйрăмах Пелепей тăрăхĕнчи тавралăх юхăнса кайнишĕн пăшăрханса калаçатчĕ, кунти экологилле лару-тăрăва мĕн май килнĕ таран хăвăртрах йĕркене кĕртесси çинчен ыйту лартатчĕ. Шăпах çав тĕллевпе пырса çитнĕччĕ те вăл КПСС Пушкăрт обкомне. Çутçанталăка сыхлас енĕпе поэтăн пысăк шайра сӳтсе явса пурнăçа кĕртмелли сĕнӳсем пурччĕ. Анчах обкомăн пĕрремĕш секретарĕ халăх поэтне йышăнмарĕ. Çапах та Яков Гаврилович ытти секретарьсемпе тĕл пулчĕ, хăйĕн сĕнĕвĕсене çырса пачĕ, Пелепей хулинчи тата районти пуçлăхсемпе курса калаçрĕ, çĕр пулăхлăхне ӳстересси, вăрмансене сыхласа хăварасси, юманпа шĕшкĕ ĕрчетесси çав калаçусенче тĕп вырăнта тăратчĕç.

Вăрман лартса ӳстерес ыйтăва Ухсай пирĕн тăрăхра, Сергей Аксаков тата Константин Иванов писательсен çĕршывĕнче, асăну комплексĕсем тăвассипе çыхăнтаратчĕ, çав таврари çăлкуçсем, юханшывсем, пĕвесемпе кӳлĕсем таса пулччăр тесе тăрăшатчĕ.

Наци хутшăнăвĕсене тĕрĕс аталантарса пырасси çинчен те нумай шухăшлатчĕ Ухсай. Чăваш шкулĕсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес, наци кадрĕсем хатĕрлес, нумай нациллĕ районсенче ертсе пыракансене кунта пурăнакан халăх йышне кура суйласа илес енĕпе Яков Гавриловичăн канашĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕччĕ. Ку ĕнтĕ чăвашсем хушшинчи ертӳçĕсем чăвашсем пулмаллине пĕлтеретчĕ. Вырăнта ларакан çынсенчен çирĕп ыйтасси, ертӳçĕсен яваплăх туйăмне ӳстерсе пырасси çинчен Ухсай çине-çинех сăмах хускататчĕ. Пелепей районĕнчи «Дружба» колхозран, калăпăр, пĕр çулхине хуçалăх укçине вăрласа кайнăччĕ. Айăплисене ширанă пек тăваççĕ, анчах тупаймаççĕ. Çапла майпа уй-хир тата ферма ĕçченĕсем пысăк çухату тӳсеççĕ. Ку ыйтупа халăх поэчĕ район пуçлăхĕсемпе ятарлă тĕл пулса калаçрĕ, тăкака кирек мĕнле пулсан та саплаштармалла тума ыйтрĕ, ӳлĕмрен унашкал япаласем ан пулччăр тесен йĕркелĕхе çирĕплетме кирлине астутарчĕ. Çавăн пекех ăна ялти хуçалăх механизмĕн тĕп ыйтăвĕсем канăç памастчĕç, ялти тирпей-илем, çурт-йĕр лартасси, пурнăç культурине хăпартасси тăтăшах шухăшлаттаратчĕç. Çав хушăрах халăх поэчĕ хăйĕн тăван колхозĕнчи çитĕнӳсемшĕн чунтан хĕпĕртетчĕ, унта тĕрлĕ халăх çыннисем туслăн пурăннине курса хавхаланатчĕ.

Паллах, хăйсен сумлă ентешĕ панă сĕнӳсене слакпуççем пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшатчĕç, поэт сăмахне пысăка хурса хаклатчĕç.

Акă эпир Яков Гавриловичпа КПСС Пушкăрт обкомĕн секретарĕ Т. И. Ахунзянов пӳлĕмĕнче ларатпăр. Пирĕнпе пĕрле пушкăртсен паллă писателĕ Рашит Султангареев та пынăччĕ унта. Тĕлпулу питĕ кăмăллă иртрĕ, тем çинчен те калаçрăмăр, малашне пĕрле тумалли ĕççене палăртса хутăмăр. Акă ĕнтĕ ĕç кунĕ те вĕçленчĕ, эпир вара çаплах калаçрăмăр та калаçрăмăр. Юлашкинчен пӳлĕм хуçи, хăй те писатель пулнă май, «Галия»

ятлă повеçĕн сыпăкĕсене вулама тытăнчĕ. Халăх поэчĕ ăна питĕ тимлĕн итлерĕ, Тагир Исмагиловичăн ĕçне пирĕн ятпа пысăк хак пачĕ.

Çав каçах хăнамăр Слакпуçне хăйĕн ентешĕсемпе тĕл пулма васкарĕ. Тăван ен, тăван çĕршыв ăна яланах туртатчĕç, вăй-хал кӳрсе тăратчĕç. Вăл халăх хăватне, халăх ăс-хакăлне шанатчĕ, халăхран уйрăлса кайнă пуçлăхсене сивлетчĕ, халăхпа хăйпе канашламасăрах халăх ячĕпе калаçакансене хытă тиркетчĕ.

Сăвăç чĕлхе пĕлтерĕшĕ пирки нумай шухăшлатчĕ, хăйĕн чĕлхине чăвашла та, вырăсла та вĕçĕмсĕр туптатчĕ. Унсăр пуçне вăл тĕрĕк чĕлхисене аван пĕлетчĕ. Пушкăрт çыравçисенчен пĕри мана çапла каласа панăччĕ: «Вăрçă хыççăн, — тенĕччĕ вăл, — пушкăрт писателĕсен черетлĕ съезчĕ пулчĕ. Аксакалсем президиумра ларатчĕç, аслă пуху ĕçне йĕркелесе пыратчĕç. Эпир вара, çамрăксем, итлесе лараттăмăр. Съезд иккĕмĕш кун ĕçлетчĕ ĕнтĕ, анчах пурте шав вырăсла калаçатчĕç. Акă съезда чăваш писателĕсен ячĕпе саламлама Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай тухрĕ. Тухрĕ те — тап-таса пушкăрт чĕлхипе шăрантара пуçларĕ. Зал ăна питĕ тимлĕн итлерĕ. Кайран, Яков Гаврилович хăй сăмахне пĕтерсен, пурте тахçанччен тăвăллăн алă çупрĕç. Çапла чăваш поэчĕ пушкăрт писателĕсен съездне чун кĕртрĕ.»

Чăнах та, чĕлхе пĕлтерĕшне Ухсай Яккăвĕ яланах пысăка хунă, сăмах хăватне, сăмах çепĕçлĕхне лайăх ăнланнă. Чăваш сăмахĕпе вăл пĕтĕм çĕршыв литературин ылтăн фондне ĕмĕрлĕх кĕрсе юлмалли чаплă произведенисем çырнă. Чăваш çынни, унăн чунĕ-чĕри, кăмăлĕ-туйăмĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен вăл нихçан кивелми чĕрĕ ӳкерчĕксем ăсталаса хăварнă. Тутимĕр, Кĕлпук мучи, Чинавье инке, Чапаев сăнарĕсем — тăван литературăн ытарайми хӳхĕм палăкĕсем.

Хура тăпра, çĕр çынни, тăван тавралăх — Ухсай поэзийĕн тĕп теми пулса тăраççĕ. Итлесе пăхар-ха, акă, алă айне тӳрех лекнĕ йĕркесене:

Хирте çеçке ӳсмен чухне
Хитре хура тăпра хăвачĕ,
Сĕткенлĕ пашкăрса кулачă
Пырса ларать сĕтел çине,
Вара ун тутлă сĕткенне
Мухтатăп эп, тăпра поэчĕ.

Мĕнле çĕр çынни хавхаланмĕ çакăн пек ăшă сăмахсене илтсен?

Ентешĕсем поэт. еткерлĕхне пысăка хурса хакласçĕ, вăл çырнисене тăван культурăн аслă пуянлăхĕ вырăнне хураççĕ.

Çук ĕнтĕ паян пирĕн хушăмăрта тăван халăх ятне яланах çӳле çĕклесе пынă ырми-канми поэтăмăр. Анчах унăн ячĕ пирĕн чĕререх упранать. Шупашкар варринчи Культура керменĕсенчен пĕрине, Пишпӳлекре вара, поэт вĕреннĕ район центрĕнче, тĕп урамсенчен пĕрине Ухсай Яккăвĕн ятне панă. Унăн ĕçĕ-хĕлĕ ĕмĕрех чыслă та хисеплĕ пулĕ.

**Адольф МУРМАНСКИЙ,**
**ĕçпе вăрçă ветеранĕ**

*САНӲКЕРЧĔКРЕ: Ухсай Яккăвĕпе Адольф Мурманский Шупашкарта.*

*В. ИСАЕВ сăнӳкерчĕкĕ*